*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

23 (2435) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014,
пуш, 28

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ **КИЛ** ХЎТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

ШУХĂШ

## Серепене çаклансан

Интернет пирĕн пурнăçра тарăн тымар ячĕ. Пĕтĕм тĕнчери серепе пурне те "тыткăна илчĕ": ватти те, вĕтти те халĕ компьютер умĕнче ларать. Шăмăршă район администрацийĕнче иртнĕ пĕр канашлура каланă тăрăх – паян районта пурăнакансен 75 процентĕн килте компьютер пур, ытларахăшĕ Интернетпа çыхăнать. Вун-вун çемьере – нетбук, планшет, ноутбук.

Çакна пĕрре те хирĕçлеймĕн: Интернетăн пурнăçри витĕмĕ çав тери пысăк. Мĕн кăна пĕлместпĕр-ши ун урлă? Яппунсем туй кунĕнче шапа ăшаласа çинине те, Африкăри пĕр кӳлĕре çирĕм виçĕ метрлă крокодил тытнине те, эрмен çынни аллă виçĕ хутчен авланса уйрăлнине те...Те тĕрĕс ĕнтĕ хыпарĕ, те суя – Интернет пурне те çăтать.

Чăнах та, Интернет ăс-тăна пуянлатать, тавра курăма ӳстерет, çĕнĕ туссем тупма та пулăшать. Унпа усă курса çемье çавăрнисем те сахал мар. Мĕнле кăна тавар сĕнмеççĕ тата Интернетра? Укçу кăна пултăр.

Усси, чăнах та, нумай. Анчах сиенĕ те тем чухлех. Интернет уйрăмах ачасемпе çул çитмен çамрăксен ăс-тăнне пăтратать. Кун пирки тĕнчери ученăйсем хытă пăшăрханса калаççĕ.

Интернетра вăл е ку информаци шыранă чух çамрăксемпе ачасем килĕшӳсĕр сăн ӳкерчĕксемпе, çаппаçарамассене ӳкернĕ видеосюжетсемпе тĕл пулаççĕ. Курманнин курас килет тенĕ пек кăсăклансах паллашаççĕ вĕсемпе.

Юрать-ха ачасене эротикăран хӳтĕлекен ятарлă программăсем туса хатĕрлерĕç. Çак программăпа усă курни шыравран порнографипе çыхăннă япаласене сирме май парать.

Ачасем кунĕ-кунĕпе онлайн-вăйăсенче, чатсемпе социаллă сĕрепере ларнин сиенĕ ӳссех пырать. Çамрăксен уçă сывлăшра çӳрес, çут çанталăк илемĕпе киленсе сывлăха тĕреклетес шухăш та çук. Вĕсем алла кĕнеке е хаçат-журнал тытмаççĕ, спортпа культура мероприятийĕсене хутшăнмаççĕ. Пĕртен-пĕр тусĕ – Интернет.

Тухтăрсем те "чан çапаççĕ": Интернет ачасемпе çамрăксен куçне вăйсăрлатать, компьютер умĕнчен хăпма пĕлмен çамрăксен çурăм шăмми кукăрăлать. Кунне икĕ сехетрен ытла ларма юрамасть ун умĕнче.

Вĕренӳре те тӳнтерле витĕмĕ палăрать. Ара, мĕншĕн кĕнеке вуламалла, сочинени çырмалла е реферат хатĕрлемелле – енчен те Интернетра пурте пулсан? Хăшĕ-пĕри реферата Интернетран "уçласа" илсе вуласа тухмасăрах учителе тыттарать. Кунта вĕрентекенĕн тимлĕхĕ питех те кирлĕ. Ачасене хăйсен тĕллĕн çырма, шухăшлама, тĕпчеме хăнăхтармалла.

2-мĕш стр. ➔

КĔСКЕН

**Совет Союзĕнче çерем çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртме тытăн-нăранпа 60 çул çитрĕ. Чăваш Енри чылай çамрăк та Алтай крайĕпе Çурçĕр Казахстан облаçĕсенче вăй хунă.**

**Ака уйăхĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчен Шупашкарта ял хуçалăх продукчĕсене вырнаçтарма пулăшас тĕллевпе «Çуркунне – 2014» уйăхлăх иртет. Ял хуçалăх таварĕ туса кăларакансене – уйăхлăха хутшăнакансене – хулари суту-илӳ вырăнĕсемпе («Николаевский», «Дар», «Северная», «Кост» пĕрлешӳсенче) тӳлевсĕр тивĕçтерĕççĕ. Çак тапхăрта апат-çимĕç продукчĕпе акмалли-лартмалли материалсене туянма май пур.**

**Раççей гидрометцентрĕн ертӳçи пĕлтернĕ тăрăх – кăçал çу кунĕсем шăрăх тăрĕç, анчах 2010 çулхи пекех мар. Пуш уйăхĕн вĕçĕнче сывлăш температури ытти чухнехинчен пысăкрах пулĕ. Çу уйăхĕнче çумăр сахал çăвĕ.**



**ПАЯН** кун тăршшĕ 12 сехет те 49 минут. Уйăх катăлса пырать.
Александр кунĕнче чайкăсем вĕçсе килни – часах пăр каясса.
**ЫРАН** – Савин кунĕнче – ăшă пулсан çуркунне те ăшă пулĕ.
**ВИÇМИНЕ** – Элексей кунĕнче – тăвайккинчен шыв юхсан ырă çуркунне килĕ.

КИЛ КАРТИ

***• Ĕнене кунсерен 70-90 г тăвар кирлĕ. Сĕтри çу хисепне ӳстерме выльăх кăшманĕ пулăшать. Кишĕр çитерни усăллă, унпа сĕт пахалăхĕ те лайăхланать. Çуркунне ĕнене типĕ те ăшă витере тытаççĕ. Ытла нӳрлĕ пулсан сĕт çуллăхĕ чакать. Ай сарăмĕ яланах типĕ пулмалла. Ĕне çиллине ăшă шывпа çумалла, кайран ал шăллипе шăлса типĕтмелле, сунă хыççăн чĕччине бор вазелинĕпе сĕрмелле.***

***• Пăруличчен 2-3 эрне маларах ĕне çилли пысăкланать, хырăмĕ анать. Ĕне çăмăлланиччен 7-10 кун юлсан ăна апат-çимĕçе сахалтарах памалла. 1-2 кило комбикорм çитет, сĕтеклĕ апата (кăшман, кишĕр, кабачок, силос) пачах юрамасть. Пăрса утти, сĕлĕне вика, ӳхлĕм, пухахлă курăк нумай çитермелле, кунне виçĕ хут ăшă шыв ĕçтермелле. Ĕне витине лайăх тасатса кăлармалла, таса улăм сармалла. Çут тĕнчене пăру килес кун йод, марганцовка, хачă, витре, супăнь, шăлла пир хатĕрлесе хумалла.***

СĔНӲ-КАНАШ

• Хурлăхан тухăçĕ унпа юнашар мĕнле тĕм ӳснинчен нумай килет. Хĕрлĕ хурлăхан крыжовникпа çумăн лайăх ӳсет, юнашар хура хурлăхан пулнине вара юратмасть.

**СДАЕМ В АРЕНДУ**

АУ «Издательский дом «Хыпар» предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 13 для использования под офис.

Со всеми вопросами обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.

ЫЙТУ – ХУРАВ

### Хур аçи кирлĕ

**?** **Манăн пилĕк хур ами. Аса хурсем кирлĕ. Ăçта туянма пулать-ши?**

**Олег АРСЕНТЬЕВ. Етĕрне районĕ, Советски.**

Хисеплĕ Олег Николаевич, сире Вăрмарти чăх-чĕп фабрикине çитсе килме сĕнетпĕр. «Сутлăх хур аçи 800 тенкĕ тăрать», – тесе пĕлтерчĕç. Ытти çĕрте çитĕнсе çитнĕ хур аçи сутнине шарламарĕç. Калăпăр, Çĕрпӳ районĕнчи Йĕкĕрварти «Вурнарец» пĕрлешӳре çамрăккисене çес сутаççĕ. Çитĕннисене çу каçсан сутĕç. Канаш районĕнчи Аслă Мами ялĕнче вырнаçнă «Канашский» чăх-чĕп фабрикинче вара хальлĕхе чăх чĕппипе çăмарта тăвакан чăх кăна туянма пулать.

Инçе каяс килмесен хур аçине пасарта е çывăхри ялсенче тупма пулать-тĕр.

### Мĕншĕн пухнă?

**?** **Ĕлĕк чăх каяшне мĕншĕн пухнă-ши?**

**Василий АНДРЕЕВ. Вăрнар районĕ, Çĕньял.**

Хисеплĕ Василий Андреевич, чăх каяшĕ питĕ паха удобрени. Ĕлĕк ăна колхоз уй-хирĕ валли пухнă. Чăх каяшĕ тата кĕл пайăшĕн ĕç кунĕ шутланă. Ĕç кунĕшĕн вара утă-улăм, тырă, çĕр улми панă. Аслă ăру шывпа хутăштарнă чăх каяшне калча ани çине йăтнине халĕ те манман. Çуркунне, ир-ирех, шăн тăнă вăхăтра, юр пĕтĕмпех кайса пĕтмен хире алă вĕççĕн чăх каяшĕпе тунă шĕвеке йăтнă. Ялĕпех, шкул ачисем таранах, хутшăннă çак ĕçе. Ура айĕнчи çĕр кăшт çăрăлма пуçласанах ана çинчен тухнă. Тепĕр ирхине каллех хире кайнă.

Чăх каяшĕ питĕ паха удобрени пулсан та унпа асăрханса усă курмалла. Азотпа фосфор виçи ĕне тислĕкĕнчипе танлаштарсан пилĕк хут нумайрахран вăл ӳсентăрана çунтарса яма пултарать. Каяша çĕре хывиччен малтан компост тумалла: ăна шăлса пухнă çулçăпа тата çулнă курăкпа пĕрле чавса тунă шăтăка е курупкана хумалла. Çулталăкран унпа усă курма та юрать.

Шĕвĕ удобрение çапла хатĕрлемелле: савăтăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ таран чăх каяшĕ ямалла, унтан туличчен шыв хушмалла. 2 талăк лартмалла, вăхăтăнвăхăтăн пăтратса тăмалла. Шĕвеке 2 талăкран ытла лартма юрамасть. Усă куриччен шывпа хутăштармалла: 9 л шыва 1 л чăх каяшĕн шĕвекĕ.

### Ветеринара чĕнмелле

**?** **Ĕне хăйне хăй çуллани пăшăрхантарать. Пыйтлă-ши вара? Купарчи çинче тӳме пысăкăш çара вырăнсем те пур. Тепĕр виçĕ уйăхран пăруламалла вăл. Мĕнпе сĕрмелле-ши?**

**Любовь ГРИГОРЬЕВА. Канаш районĕ, Энтрияль.**

Ĕне пуçĕпе майне, çурăм шăммине кĕлпе сĕрсен пыйтăран çăмăлланăх хăтăлма пулать. Пыйтă урăх вырăнта ĕрчеме те. Анчах çара вырăнсем пур тени хытах сисчĕвлентермелле. Ветеринара чĕнмелле. Кукша чирĕ ернипе ерменнине вăл кăна калама пултарĕ. Выльăха вакцинаци туни кăмпа чирĕ малалла аталанасран, çавăн пекех унпа тепĕр хут чирлесрен хăтарĕ. Тухтăр киличчен çара вырăнсене водород перекиçĕпе çуса стрептоцидпа сапма юрать. Ветеринари лавккисенче сутакан «Зоомиколь» текен препарат та аван.

Ĕне хăйне хăй çуллани стреспа та, тăвар е витамин çитменнипе те çыхăнма пултарнă. Çапах та ĕнене чи малтанах ветеринара кăтартма тăрăшăр.

Халăхра пĕтĕ ĕне хăйĕн çурăмне çулласан вăкăр пăрулать теççĕ, аякĕсене çулласан – тына пăру.

ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 28.03 | 29.03 | 30.03 | 31.03 | 1.04 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, $^{0}C$ | 2-4 сехетре | –6 | –5 | –5 | –4 | –3 |
| | 14-16 сехетре | +1 | –1 | +2 | +1 | 0 |
| Юр çăвать | | * | – | * | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 743 | 748 | 738 | 736 | 742 |



**Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хаксем хăпараççĕ.**
**Йӳнĕпе çырăнса юлма васкар!**

| Индекс | Кăларăмсем | Çырăнтару хакĕ | |
|---|---|---|---|
| | | ака уйăхĕн 1-мĕшĕччен | ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен |
| 54838 | Хресчен сасси | 226-62 | 379-80 |
| 43887 | Хресчен сасси-Кил | 102-90 | 192-66 |

ХЎТЛĔХ ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## Серепене çаклансан

1-мĕш стр.

"Хăвăрăн ачăрсене Интернет тыткăнĕнчен çăлăр!" – çапла чĕнсе калать православи чиркĕвĕ малашлăх пирки пăшăрханса.

Паян педагогсемпе педиатрсен те чунĕ лăпкă мар: шкул çулне çитмен ачасен хушшинче дисграфипе дислекси ўсни, вĕсен психикипе хăйсене хăйсем тыткаласси япăхланни хытă палăрать. Психологсем те пăшăрханаççĕ: компьютер умĕнче нумай ларакан ачасем питĕ хăвăрт тарăхаççĕ, сăлтавсăрах çилленеççĕ, çапас-хĕнес туйăмĕ те пысăк.

Чăнах та, компьютерпа ĕçлеме пĕлмен çын паян хуть те мĕнле тытăмра та професси тĕлĕшĕнчен ўсеймест, тĕрлĕ информацие кирлĕ çĕре вăхăтра çитерейместь, Интернет май паракан тĕрлĕ çăмăллăхпа усă кураймасть.

Апла пулсан мĕн тумалла-ха? Специалистсем пĕчĕк ача усă куракан компьютер паха пулмаллине палăртаççĕ. Ачасем валли ятарлă компьютер та сутаççĕ. Гигиена ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерекен, вĕрентў тата аталану программисем, флеш-мультиксем, ўкерчĕксем тума тата музыка çырма вĕрентекен программăсем усăллă пулмалла.

Ашшĕ-амăшĕн хăйсен ачи компьютерпа мĕнле вăйăсем вылянипе интересленсех тăмалла, вĕсем агрессие, экстремизмпа терроризм тыткăнне çакланасран хытă асăрханмалла.

Интернет пурне те – çитĕннисене те, ачасене те – усă кăна кўтĕрччĕ. Ачасемпе çамрăксем Интернет пулăшнипе илемлĕхе хăнăхчăр, тĕнче культурин пуянлăхĕсене курма-пĕлме вĕренччĕр.

**Иван САЛАНДАЕВ.**

## КĔСКЕН

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăра Сывлăхпа спорт кунĕ ирттересси пирки Указ кăларнă. Унпа килĕшўллĕн çынсен кашни уйăхра пĕр хут спорт керменĕсене тўлевсĕр çўреме ирĕк пур. Çак кунсенче пур район-хулара Сывлăх кунĕ иртнĕ. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан 340 пине яхăн çын çак мероприятие хутшăннă. Çавна май республикăра спортăн 4500 объекчĕ ĕçленĕ.**

**Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ пĕлтернĕ тăрăх – иртнĕ çул республикăра ача çураласси ўснĕ. Кашни 1000 çын пуçне 0,8 çын хушăннă. Тин çуралнă ачасем сахал вилес енĕпе эпир лайăххисен шутĕнче. Ку тĕлĕшпе федерацин Атăлçи округĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнатпăр, Раççейре – иккĕмĕш.**

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

### Çу ĕммелле

**Ирсерен çăвартан йўçек тутă кĕрет. Мĕншĕн пулать-ши вăл?**

**Лариса КРЫЛОВА.**

Пĕверпе ват çулĕсен ĕçĕ пăсăлсан ирхине çăварта йўçек тутă тăрать. Ирсерен, шăл тасатиччен, пĕр эрне таран, тасатман тип çу (нерафинированное масло) ĕмсе пăхăр. 1 кашăк чухлĕ тип çăва çăварта 10-15 минут майлă кустармалла. Малтан вăл çăралать, унтан шĕвелет. Çавна сурса пăрахмалла та. Сурса пăрахнă шĕвек шурă пулни апат ирĕлтерекен орган тасалса çитнине пĕлтерет.

Шăлан çырли чейĕ туса ĕçни вата лайăххах тухма пулăшĕ. Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва 1-2 кашăк шăлан çырли хушса термоса ярса лартмалла. Темиçе сехет тăрăлтарса лартсан ăна чей вырăнне ĕçмелле.

### Пуç ыратать

**Кашни ир пуç ыратнипе тата кăмăл пăтраннипе вăранатăп. Хама хам мĕнле пулăшмалла-ши?**

**Анна ВАСИЛЬЕВА.**

Пуç купташкинчи юн пусăмĕ пысăк чухне тĕл пулать кун пекки. Çавăнпа сирĕн пуçа тĕплĕн тĕрĕслеттермелле. Хăвăра хăвăр пулăшас тесен каççерен çур стакан кĕвелĕкпе пĕр пан улми çисе выртăр. Вĕсем организмри ытлашши шĕвеке кăларма пулăшĕç. Чăрăш тăрри (полевой хвощ) курăкĕн шывĕ те усăллă: тин вĕретнĕ 1 стакан шыва 2 кашăк курăк хушса термоса ямалла. Çур сехет тăрăлтарса лартмалла. Кунне 4 хут стаканăн пĕрре тăваттăмĕш пайĕ таран ĕçмелле.

**Ирина ЛИСТОВСКАЯ, терапевт.**

### Сăмса сывламасть

**Ирсерен сăмса тулса ларнипе вăранса каятăп. Хваттерте сывлăша нўретекен хатĕр те пур. Тусанне те шăлсах тăратăп – анчах сăмса пур пĕрех сывламасть. Мĕнпе çыхăннă-ши çакă?**

**Ирина.**

Шăнса чирлемесĕрех сăмса сывламаннине чылай чухне юн тымарĕсене саракан е пĕрекен сăмсан лăймака сийĕ шыçнипе çыхăнтараççĕ. Отоларинголог патĕнче тĕрĕсленмелле. Ахăртнех аллергие хирĕç кĕрешекен препаратсемпе усă курма е сăмса хăвăлне шăнтса сиплеме (криотерапи) тивĕ.

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Мастопатирен.** Çур литр шур эрехе 10 кашăк календула чечекĕ тата 7 гвоздика пĕрчи ярса 2 эрне тăрăлтарса лартмалла. Кунне 3 хут, апат умĕн 1 сехет маларах пĕрер кашăк ĕçмелле. Çакăнпа пĕрлех боровая матка текен курăк настойне ĕçмелле: çур литр эрехе 50 г курăк ярса 2 эрне тытмалла. Сиплĕ шĕвеке кунне икĕ хут 2 чей кашăкĕ ĕçмелле.

Çавăн пекех компресс тумалла. Пусма таткине ăшăтнă эрехпе йĕпетсе кăкăр çине хумалла, полиэтиленпа витсе çăм тутăрпа çыхмалла.

Тепĕр меслет. Теркăланă хĕрлĕ кăшманпа пыла (3:1) хутăштарса купăста çулçине сĕрмелле, ыратакан вырăна хумалла.

**Урари юн çаврăнăшне лайăхлатма.** 1 стакан тип çу çине 2/3 стакан чухлĕ вĕтетнĕ лавр çулçи ярса 6 кун лартмалла. Урана шыва чиксе ăшăтнă хыççăн хайхине ыратакан вырăнсене сĕрмелле.

100 г чухлĕ ирĕлтернĕ сысна çăвне 1 кашăк тăварпа хутăштармалла. Урана çак маçпа сĕрсе пир татăкпа чĕркесе ирчен тытмалла.

**Çуркуннехи авитаминозран тата ывăннинчен** 1 лимон, 2 апельсин, 1 грейпфрут, 2 кашăк пыл, 1 стакан минерал шывĕ (газсăр), чĕптĕм хĕрлĕ пăрăç кирлĕ. Çимĕçсене хуппинчен тасатса сĕткенне пăчăртаса кăлармалла, пыл, пăрăç, шыв хушса ирпе кофе вырăнне ĕçмелле.




Ипотечный кредит

Звонок по России бесплатный
8 800 200-02-90 | www.rshb.ru
ОАО «Россельхозбанк». Генеральная лицензия Банка России № 3349. Реклама.

г. Чебоксары, Президентский б-р, 31
тел.: 8 (8352) 66-22-06

## СПЕЦИАЛИСТ КАНАШĔ

### Çуркунне вăй илет

**Çуркунне çитсен урологсем патне черет вăрăмланать. Хĕрарăмсене шăк хăмпи шыççи канăçсăрлантарма тытăнать. Цистит сунас мар, хăй тĕллĕн иртмест.**

Специалистсен шучĕпе цистит пыршăлăх вирусĕ лекнипе пуçланать. Çын шăнсанах бактерисем харсăрланса каяççĕ. Хĕрарăмсен шăк çулĕ кĕске те сарлака. Çавăнпа бактерисем унта çăмăллăнах лекеççĕ.

Циститпа чирлĕ хĕрарăм тепĕр чух килтен те тухаймасть. Кашни 3-4 минутран шăк ыраттарса тухни халтан ярать. Çийĕнчех сипленмесен чир тарăна каймa пултарать. Çавăнпа чир пуçламăшĕнчех тухтăр патне каймалла. Микроба тата шыçса хирĕç кĕрешекен эмелсĕр ĕç тухмĕ. Вĕсемпе сипленнипе пĕрлех юн çаврăнăшне лайăхлатакан препаратсемпе тата шăк хăвалакан курăксем (чăрăш тăрри, хурăн кăчки) пирки те манмалла мар. Кунсерен 1,5-2 литр шыв ĕçни шăкпа пĕрле бактерисене кăларма пулăшĕ.

Сипленнĕ хушăра эрех-сăрапа газлă шыв, тăварлă, пăрăçлă, маринадланă тата тĕтĕмленĕ çимĕçпе пачах усă курма юрамасть. Вĕсем шăк хăмпине пушшех тăртантарса чире вăйланма кăна пулăшĕç.

Çакна ас тăвăр: пыршăлăх вирусĕ шăк хăмпине ан лектĕр тесен савăшăва кĕриччен малтан ар органĕсене питĕ лайăх çумалла.

**Дмитрий БУБНОВСКИЙ, уролог.**

## ШУТА ИЛМЕ

### Çăвара хыпиччен

Сиенлĕ апат-çимĕç шутне эрех-сăра, сахăр, газлă шыв, маргарин, майонез, фаст-фуд, кăлпасси, тĕтĕмленĕ çимĕç, консервсем, вĕри шыв янипех пиçекен лапшапа тĕрлĕ яшка кĕрет.

Сахăрта усăллă нимĕнле япала та çук, пысăк калориллĕ çимĕç шутланакансем тĕрлĕ чир-чĕре аталанма çеç пулăшать. Газлă шывра та сахăрпа искусствăлла хутăш нумай. Маргаринпа майонезра сиенлĕ çупа консервант чылай. Кăлпассипе консервсем, тĕтĕмленĕ çимĕçсем канцерогенпа пуян. Унти натри глутаматне вара организм питĕ хăвăрт хăнăхса çине-çинех ыйтма пуçлать. Хăвăрт хатĕрлесе çимелли çимĕçсемпе фаст-фудра сиенлĕ хутăшсемпе пĕрлех гормон шайлашăвне пăсакан япаласем те пур.

***• Пылак юратакан хĕрарăмсем çакна кăмăлласах кайманнисемпе танлаштарсан чĕрепе юн тымарĕсен чирĕпе 2 хут ытларах чирлеççĕ.***

## КУЛĂШ, ПУЛĂШ!

Амăшĕнчен тем те ыйтаççĕ:

«Мĕн çимелле? Мĕн тăхăнмалла? Мĕн туянмалла? Нускине ăçта хунă? Çакна мĕнле тумалла?»

Ашшĕне пĕр ыйту кăна параççĕ: «Анне ăçта?»

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## КĔСКЕН

**Иртнĕ ытлари кун Культура ĕçченĕсен кунне паллă тунă. Професси уявне республикăра 8 пине яхăн çын кĕтсе илнĕ.**

**Паян Чăваш Енре «Раççей юррисем» фестиваль-марафон вĕçленет. Раççей халăх артистки Надежда Бабкина ертсе пыракан «Русская песня», «Славяне» ансамбльсемпе ытти юрă-ташă ушкăнĕсем республикăри хуласемпе районсенче хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă.**

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Сĕлĕ печенийĕ

**2 стакан сĕлĕ хăрпăкĕ, 100 г услам çу, 1 стакан сахăр, 1 стакан çăнăх, 2 çăмарта, çур стакан аçтăрхан мăйăрĕ, тип çу.**

Ирĕлтернĕ услам çăва сахăрпа хутăштармалла, çăмарта, çăнăх, сĕлĕ хăрпăкĕ, вĕтетнĕ мăйăр ярса лайăх пăтратмалла. Унтан пысăках мар çаврашкасем туса тип çу сĕрнĕ çатмана хумалла, кăштах пусса лапчăтмалла. 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра 12-15 минут пĕçермелле.

### Йăва

**700 г çăнăх, 2 çăмарта, 10 г тăвар, 20 г услам çу, 100 г пыл.**

Сĕте тăвар, çăмарта, улам çу ярса лайăх пăтратмалла, унтан алланă çăнăх хушса хытах мар чуста çăрмалла, хăпариччен 15-20 минут кĕтмелле. Чустана çăмах евĕр тата-тата илсе йăваламалла. Духовкăра пĕçермелле. Хатĕр йăвана ирĕлтернĕ пылпа сĕрмелле.

### Асанне торчĕ

**2 çăмарта, 1 стакан хăйма, çур банка çăратнă сĕт (сгущенка), 1 стакан сахăр, 1 кашăк сĕт, 1,5-2 стакан çăнăх, 2 чей кашăкĕ уксуспа йăвашлатнă апат соди**

илсе чуста çăрмалла. Хутăша 2 пая пайламалла, пĕр пайне 2 кашăк какао хушмалла. Духовкăра икĕ пашалу пĕçермелле.

Хăмăр тĕслĕ пашалăва тăваткалласа касмалла, кашнине хăйма кремĕпе (500 г хăйма, 4-5 кашăк сахăр) сĕрсе сарă пашалу çине ретĕн-ретĕн хумалла. Çиелтен çакнашкал çăра пылак хутăш ямалла: 50 г сĕте 3-4 чей кашăкĕ какао тата 30 г услам çу хушса йăваш çулăм çинче çăраличчен пĕçермелле.

## САЛАМЛАТПĂР!



Шупашкар районĕнчи Мăн Марка ялĕнчи **Ефросиния Порфирьевна Полытовăна** 90 çул тултарнă ятпа чунчĕререн саламлатпăр. Пирĕн анне çамрăклах ĕçченлĕхпе, хастарлăхпа палăрнă. Вăрçă вăхăтĕнче Атăл леш енне окоп чавма çӳренĕ. Арçынпа тан лаша кӳлсе ĕçленĕ. Аттепе 8 ача пăхса çитĕнтернĕ вĕсем. Паян анне Канаш районĕнчи Çĕнĕ Ачча ялĕнче Ирина йăмăкăн çемйипе пурăнать.



Аннемĕр, тавах сана пире çуратса ӳстерсе çын тунăшăн, пирĕншĕн пĕтĕм ăшшуна, ырлăхна хĕрхенменшĕн. Çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Ачисем, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, 14 мăнукĕ, мăнукĕсен 15 ачи, хăтисемпе тăхлачисем, кӳршисемпе тăванĕсем.**

*Шăнса килекене ăшăтса яр, выçса килекене тăрантарса яр.*

*Хупах енне çаврăнсан кимĕ яракан хуçа та саланать.*

(Ваттисен сăмахĕ).

## АЛ АЙĔНЧИ

### Сухан усси

Япони ученăйĕсем пуçлă сухан сиенлĕ микробсемпе вируссене пĕтернипе пĕрлех пуç мимин клеткисене çамрăклатма пулăшнине тĕпчесе пĕлнĕ. Сухан çини ас тăвăма та лайăхлататать, кăкăр парĕн ракĕ пуласран та хӳтĕлет.




*Пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен куллен тухакан «Хыпар» хаçата 2014 çулăн II çурри валли малтанхи хакпа –*

**460 тенкĕ те 86 пус –**

*сырăнса ĕлкĕрĕр.*

*Ака /апрель/ уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хак ӳсет. Эрнесерен пичетленекен 16 страницăллă «Хыпар-шăмат куна»*

**218 тенкĕ те 22 пуспа**

*сырăнса илсен çемье бюджетне пушшех перекетлĕр. Ака уйăхĕнчен ку кăларăм хакне те пысăклатаççĕ.*

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Чӳлмеке тасатасчĕ

? **Кăмака яшки, шаркку çиме юрататăп. Тутлă апат пĕçерме ятарлă чукун пур манăн, анчах чӳлмеке ăнсăртран çуллă сăрăпа лектерсе варалarăм. Питĕ пăшăрханатăп. Мĕнпе тасатмалла-ши?**

**Надежда СЕМЕНОВА. Вăрмар поселокĕ.**

**Вĕрилентерсе.** Чукун савăта шăратмалли лампăпа (паяльная лампа) е газ горелкипе сăрри çемçеличчен хĕртмелле, унтан тӳрех хурçă шпательпе хырса тимĕр щеткăпа сătăрса тасатмалла.

**Алă инструменчĕпе.** Шпательпе, путпилккăпа (напильникпе), шултра картлă путпилккăпа (рашпильпе), тĕрлĕ каскăчпа, наждак хучĕпе хырса тасатма май пур.

**Хими мелĕпе.** Çуллă сăрра çиекен сĕлтĕпе – кали е натри гидроксичĕн расворĕпе – сĕрмелле. Сăрă шӳсе хăпарсан ăна çăмăллăнах тасатса илме пулĕ.

## ПĔЧĔК ВĂРТТĂНЛĂХСЕМ

• Ăшаланă какай çемçе те техĕмлĕ пултăр тесен ăна хатĕрличчен малаrax сăрапа шӳтерсе лартаççĕ.

• Кивелнĕ сĕтел-пукана сăн кĕртме сăрапа йĕпетнĕ пусма таткипе шăлса тасатмалла.

## КАЛАÇĂВА ТĂССА

### Кĕнекепех меллĕччĕ çав

«Хресчен сасси - Кил» хаçатăн пĕр кăларăмĕнче «Кĕнекепех лайăхчĕ» статья пичетленнĕччĕ. Унта «сутăпа усă курнăшăн тӳлемелли кĕнекене мĕншĕн пĕтерчĕç-ши, питĕ меллĕччĕ-çке, çырма та, тӳлеме те» тесе çырнăччĕ. Ман пек шухăшлă çынсем татах пур иккен. Ватă çынсене çак япала питĕ пăшăрхантарать. Ĕлĕк сутă кĕнекипе усă курса кашни уйăхшăн пĕр сиктермесĕр тӳлесе пурăнаттăмăр. Халĕ вара миçе киловатт çуннине пăхса таçта шăнкăравласа пĕлтермелле. Апла тумасан хут татки çине çырса ярса памалла. Тепĕр чухне унччен тӳленине шута илмен квитанци килет, çĕнĕрен тӳлемелле пек пулса тухать. Пенси илсен çеç тӳлесен кая юлать иккен. Манăн вара пенси париччен укçа ăçтан тупмалла? Хамăн ватă пуçпа çак пуç ватмăш хуравне шыраса аппаланатăп. Пурнăçĕ ахаль те çăмăл мар. Мĕншĕн тата йывăрлатаççĕ-ши? Киловатне тĕрĕслекенне килсен хам кăмăлсăррине каларăм та вăл çаплах хуравларĕ: «Эпир айăплă мар. Путина кайса калăр». Аптрамалла. Çакна Путин тунине пĕртте ĕненес килмест.

**Зинаида Овчинникова.**
**Муркаш районĕ, Мăн Сĕнтĕр сали.**

**«Кил», «Сывлăх», «Тĕпел» кăларăмсене Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, пуш уйăхĕн 31-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Театральный абонемент. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+)10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.30-12.00 Рабочая смена. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Тема дня. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05- 20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

**Ытлари кун, ака уйăхĕн 1-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14-15.00 Янра юрă! (хид-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.10-16.30 Эстрадный концерт. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 Чунлă эфир. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, ака уйăхĕн 2-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30,10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Çĕр Сум. (12+) 11.30-12.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (6+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.10-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 22.10-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерни кун, ака уйăхĕн 3-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 22.30-23.00 Радиобиблиотека. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Чунлă эфир. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Студгородок. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, ака уйăхĕн 4-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Радиобиблиотека. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30,14.10-14.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Театральный абонемент. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.10-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 18.10-19.00 Иксĕлми çăлкуççем. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăмат кун, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30, 18.05-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.05-11.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Концерт классической музыки. (12+) 15.30-16.30 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 16.30-17.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-19.30 Кĕрекене пуçтарăнсан. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕ. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

**Вырсарни кун, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Студгородок. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Концерт классической музыки. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.30-17.00 Шурăмпуç. (12+) 17.05-18.00 Чунлă эфир. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**9. Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 89278617589, 89373810585.

**15. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**20. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

**19. Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 8-903-322-57-66.

**22. ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

**24. ГРАБЛИ, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Доставка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

